Юбилей

# Ăсталăх анинче палăрнă çын

***Аслă Елчĕкре çуралса ӳснĕ Владимир Иванович Агеев – живопиçпе графикăра çĕр-шывĕпех палăрнă ăсти.***

Ака уйăхĕн 2-мĕшĕнче В.Агеев хăйĕн 80 çулхи юбилейне паллă тăвать. Сакăр теçетке çулта нумай пархатарлă ĕç тума пултарнă пирĕн ентешĕмĕр. Вăл Шупашкарти художество училищинчен вĕренсе тухнă, К.В.Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш АССР патшалăх премийĕн лауреачĕ, Чăваш АССР халăх художникĕ, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникĕ.

Унăн ĕçĕсенчи тĕп тема – тăван халăх пурнăçĕ. Елчĕкри историпе тăван тавралăх халăх музейĕнче упранакан картинисем – пирĕн пурнăçри чи паха парнесем. Кирек хăш ӳкерчĕкĕ те тарăн шухăша ярать. «Елчĕк пасарĕ» ĕçне вара чăвашсен культурипе йăли-йĕркин, истори аталанăвĕн, кăмăл-туйăмăн хăйне евĕрлĕ энциклопедийĕ теме пулать.

В.Агеев кĕнекесем те нумай илемлетнĕ. Пĕтĕм тĕнчери тата Пĕтĕм Союзри куравсенче кăтартнă ĕçĕсенче Владимир Иванович чăваш культурин пуянлăхне, унăн хальхи сăнарне ĕненмелле уçса панине çирĕплетеççĕ. Унăн сатирăллă графикăра тунă произведенийĕсем ку чухнехи чи çивĕч ыйтусене хускатаççĕ, мĕн пур йăх-яха пĕтерсе пыма пулăшаççĕ.

Ăста художник С.Элкерĕн «Ешĕл хунав», И.Яковлевăн «Ача-пăча калавĕсем», М.Федоровăн «Арçури», А.Трофимовăн «Çыруллă кĕпе», «Чăваш легендисемпе юмахĕсем», «Чăвашла-вырăсла словарь» кĕнекисене илемлетсе çĕнĕ варкăш кĕртнĕ.

Мĕн каласси пур, чăвашсен паллă художникĕ В.Агеев Елчĕк енĕн мухтавĕ, таланчĕ. Унпа калаçма, канашлама та çăмăл. Кашни калаçăвĕ чунра хавхалану çуратать, ĕмĕт-тĕллевсен çыхланса ларнă çăмхине салатма пулăшать.

Çак кунсенче унăн ĕçĕсенчен хатĕрленĕ курав Шупашкарти художество музейĕнче ĕçлет, çавăнпа та унăн картинисен куравне хамăр патăмăрта каярах йĕркелеме тивет.

Владимир Ивановичпа пĕрремĕш хут тĕл пулнă чух калаçни халĕ те асрах. Эпĕ унран хăйĕн пултарулăхĕн никĕсĕ мĕнре-ши тесе ыйтсан вăл çапла хуравланăччĕ:

– Урам хапхи уçăлмассерен, хамăн ăсталăха шыраса тупнă ӳсĕм лавне çынсем патне çитерме васкатăп эпĕ. Тăван чăваш çыннисен кĕрнеклĕ кĕлеткисене ăсталаса, хĕр упраçăн



илемлĕ те хӳхĕм пĕвĕсене мухтаса тăван халăхăн сăпайлă та хăюллă ăсхакăлăн ăмăрт кайăкне янкăр тӳпере те сарлака çунатпа вĕçсе çӳреме вăй-хал парасшăн эпĕ...

**В.ВАСТУЛОВА,**
**Елчĕкри историпе тăван тавралăх халăх музейĕн заведующийĕ.**

*Сăн ӳкерчĕкре: В.И.Агеев.*